К84.89(=496)
С90
4-46592

ЮРАПИ

Дмитрий СУСЛИН

ЮРАПИ



Национальная библиотека ЧР
4-046592



Мой юный друг, эта книга
рассказывает о некоторых традициях,
обрядах и праздниках
наших предков. Она написана по мотивам
народных сказаний.
Поэтому «Юрапи» не простая сказка,
а этнографическая.
Но и волшебства в ней предостаточно.
Ведь это сказка.

Хаклă тусăм, çак кĕнекере
чăвашсен авалхи хăш-пĕр йăли-йĕркипе
уявĕсем çинчен вуласа пĕлме пулать.
Ăна халăх халапĕсене тĕпе
хурса çырнă. Çавăнпа «Юрăпие»
этнографи юмахĕ теннĕ те.
Анчах асамлăх та унта çителĕклех.
Юмах вĕт-ха вăл.

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

Чебоксары Шупашкар
Чувашское книжное издательство Чăваш кĕнеке издательстви
2014 2014

Дмитрий СУСЛИН

ЮРАПИ

Этнографическая сказка

Издание второе

Перевод на чувашский язык
Г.А. Матвеевой

Художник *Н.Н. Тихонова*



К84.89(=Чув)
С90
К
Ч/р

Дмитрий СУСЛИН

ЮРĂПИ

Этнографи юмахĕ

Иккĕмĕш кăларăм

Чăвашла *Г.А. Матвеева*
куçарнă

Художникĕ *Н.Н. Тихонова*



Проверено 1 СЕН 2017



Наш край называют страной ста тысяч песен. Это оттого, что мы всё делаем с песней, с музыкой и добрым сердцем. Поэтому всё так хорошо у нас и получается. Так оно повелось издавна. Перед любым важным делом сначала пели песни, а потом уже рукава засучивали и работали и не знали усталости, потому что песня в работе — главная помощница.

Давным-давно, может пятьсот лет назад, а может и всю тысячу, жила в одной деревне девушка. Звали её Юрапи, что означает певунья. Очень любили её люди, и не только за то, что умная была, красивая и работящая. Очень она красиво пела. Так красиво, так звонко, что соловьи стыдливо умолкали, когда она начинала

Ч-46592
Национальная библиотека Чувашской Республики
Проверено 1 СЕН 2017



Çĕр пин юрă çĕршывĕ теççĕ пирĕн патшалăха. Мĕншĕн тесен кирек мĕнле ĕçе те юрăпа, ырă чунпа пуçăнатпăр эпир. Çавăнпа тытнă ĕç ăнса пырать. Авалтанах çапла хăнăхнă. Кирек хăш пысăк ĕçе пуçлас умĕн пĕр çавра юрă шăрантарнă, унтан вара çанна тавăрнă та ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ. Юрри хăех вăй парса тăнă.

Тахçан-тахçан, тен, пилĕк çĕр, тен, пин çул каялла, пĕр ялта пике пурăннă. Ăна Юрăпи тесе чĕннĕ. Çав пикене çынсем питĕ юратнă. Ăслă та илемлĕ, ĕçчен пулнăшăн кăна мар, ытарайми юррисемшĕн те. Унăн уçă та илемлĕ сасси янăраса кайсан çепĕç саслă шăпчăксем те вăтанса шăпланнă. Таврара пурăнакан çынсем вара чӳречисене яри уçа-уçа хунă. Вĕсен Юрăпи юрринчи пĕр сăмаха



петь, а по всей округе тут же открывались окна. Люди не хотели пропустить в песне Юрапи ни одного слова. И такие песни слагала прекрасная певунья, что до сих пор люди их помнят, любят и поют на всех праздниках.

А первым праздником в старину у чувашей был Маркун — праздник Нового года. Тогда он начинался весной, в последний день недели Калам. Вот в один из таких новогодних дней и началась эта история.

Утром всей деревней пошли на берег реки, где стоит старый Дуб, хранитель деревни, встречать Солнышко, просить его, чтобы было оно для людей весь год добрым и ласковым. Впереди шёл самый уважаемый житель деревни старик Ахтупай, который знал все об-



та илтмесĕр юлас килмен. Çав илемлĕ юрăç хывнă юрăсене çынсем халĕ те астăваççĕ, уявсенче юратса юрлаççĕ.

Чăвашсен чи малтанхи уявĕ Мăнкун пулнă, вăл çĕнĕ çулталăк пуçланнине пĕлтернĕ. Çĕнĕ çул чăвашсемшĕн çуркунне — Калăм эрнин юлашки кунĕнче пуçланнă.

Çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенчен пĕринче пуçланнă та ĕнтĕ çак истори.

Ирпе ирех пĕтĕм ял халăхĕ шыв хĕрринче ларакан ĕмĕрхи Юман патне çул тытнă. Хĕвеле кĕтсе илме. Пĕтĕм тĕнчене савса пăхакан Хĕвелрен вĕсем çулталăк тăршшĕпех çынсемшĕн ырă та ачаш пулма тархасланă. Халăха ялти сумлă ватă, мĕнпур йăласемпе кĕлĕсене пĕлекен Ахтупай ертсе пынă. Ун хыççăн капăр тум-





ряды и молитвы, и был на них главным. За ним шагали дети, молодёжь и все остальные в новых нарядах и с радостными улыбками.

Перед восходом Ахтупай произнёс молитву, низко поклонился Земле и Небу, но Солнце показываться не торопилось. Догадались люди, что не хочет оно без песни появляться. Пора было приветную песню начинать. А кто запевать должен? Конечно, Юрапи! Призвал её к себе Ахтупай и велел красавице запевать, а Кеверу, лучшему деревенскому скрипачу, ей подыгрывать. И как только голос Юрапи раздался над деревней да полилась нежная мелодия скрипки, небо порозовело, запрыгали по облакам первые лучи Солнца, а потом и оно само выкатилось из-за тёмного леса. И сразу всё вокруг светло стало, радостно, птицы запели, земля задышала, трава зазеленела, цветы распустились, старый Дуб закачал ветками, а студёный Ключ, что бил из-под земли рядом с Дубом, заволновался, и весело заиграли в его чистой воде солнечные зайчики. Наступил Новый год.

Люди подхватили песню Юрапи, завели хоровод. Дети стали между собой бороться, а взрослые их зерном обсыпали, чтобы росли здоровыми и крепкими. А там, где зерно в землю попадало, сразу же всходы зелёные показались. Так действовало на всё живое пение Юрапи.

— Ай да Юрапи! — радовались люди. — Ай да молодец! Солнце разбудила, Манкун призвала. Будем и в этом году с урожаем.

ланнӑ ватӑ-вӗтӗ утнӑ. Пичӗ-куҫӗ пурин те савӑнӑҫпа ҫиҫнӗ.

Ҫутӑласса кӗтсе Ахтупай малтан кӗлӗ вуланӑ, Пӗлӗтпе Ҫӗре пуҫ тайнӑ, анчах Хӗвел темшӗн курӑнма васкаман. «Хӑйне юрӑпа чыс тӑвасса кӗтет пулӗ-ҫке вӑл», — тавҫӑрса илнӗ ҫынсем. Саламлӑ юрӑ пуҫарма вӑхӑт ӗнтӗ. Кама юрлаттарас-ха ӑна? Паллах, Юрӑпие! Ахтупай пикене хӑй патне чӗнсе илет те юрӑ пуҫлама сӗнет, кӗввине калама ялти ятлӑ сӗрме купӑсҫӑна Кӗвӗре хушать. Ял ҫийӗн сӗрме купӑсӑн ҫепӗҫ кӗвви тата Юрӑпин илемлӗ сасси янӑраса кайсанах тухӑҫ хӗрелме пуҫлать, пӗлӗтсем тӑрӑх Хӗвелӗн малтанхи пайӑркисем сиккелесе выляма тытӑнаҫҫӗ.

Кӗҫех тӗттӗм вӑрман хыҫӗнчен Хӗвелӗ хӑй те кусса хӑпарать. Тавралӑх тӳрех ҫуталса каять, ҫӗр пӑсланса сывлама пуҫлать, кайӑксем юрласа яраҫҫӗ, курӑк ешерме тытӑнать, чечексем ҫурӑлаҫҫӗ. Турачӗсемпе сулкаласа ватӑ Юман Хӗвеле саламлать. Хӗвел пайӑркисем кӗреш Юман ҫывӑхӗнчи Ҫӑлкуҫран юхса тухакан шӑнкӑр шывра чӳхенсе выляма пикенеҫҫӗ. Ҫӗнӗ ҫул пуҫланать.

Юрӑпа хавхаланнӑ халӑх вӑйӑ картине тӑрать. Ачасем пӗр-пӗринпе вӑй виҫеҫҫӗ, ырӑ-сывӑ ӳсмелле пултӑр тесе аслисем вӗсем ҫине тырӑ ывӑҫласа сапаҫҫӗ. Ҫӗр ҫине ӳкекен пӗрчӗсем ҫав самантрах шӑта-шӑта тухаҫҫӗ. Юрӑпи сасси пӗтӗм ҫут ҫанталӑка чӗрӗлӳ хӑвачӗ кӳнӗ.

— Маттур та-ҫке Юрӑпи, — савӑннӑ ҫынсем. — Ай маттур! Хӗвеле вӑратрӗ, Мӑнкуна чӗнсе илчӗ. Апла тӑк кӑҫал та тырӑ-пулӑллӑ пулатпӑр.



А Кевер так растрогался, что не выдержал, и тут же у всех на глазах в третий раз уже попросил Юрапи выйти за него замуж. Красавица ему не отказала, но и «да» не сказала, а лишь улыбнулась и вымолвила:

— Посмотрим, посмотрим!

А бабушка Айуйке только досадливо ногой топнула:

— Ай-уй! Долго думаешь. Смотри, не прогадай!

Но тут Ахтупай вмешался:

— Ничего, Айуйке, не печалься, до осени ещё время есть. Попляшем мы с тобой на свадьбе у Юрапи, попьем пива, песни споём.

Ахтупай велел всем идти в деревню, застольем и песней встречать Манкун дома. Праздник продолжался.



Юрăпие юратакан Кĕвĕр виççĕмĕш хут ĕнтĕ пĕтĕм халăх умĕнчех пикене хăйĕн мăшăрĕ пулма ыйтать. Чипер хĕр ăна сивлемест, анчах шантарса та каламасть.

— Пурăнсан курăпăр унта, — тет йăл кулса.

Айуйкке кинеми кăмăлсăррăн тăпăртатса илет:

— Ай-уй, Юрăпи, вăрах шутлатăн. Телейне çухатмăн-и?

Ахтупай мучи ăна çапла калать:

— Темех мар, Айуйкке, ан кулян! Кĕркуннеччен вăхăт пур-ха. Туйне кĕр мăнтăрĕпе тăвăпăр. Ташлатпăрах Юрăпипе Кĕвĕр туйĕнче, сăра та ĕçĕпĕр, юрă та юрлăпăр.

Ахтупай пурне те килĕсене саланма, Мăнкуна кĕрекере çăкăр-тăварпа, юрăпа чыслама хушать. Уяв малалла тăсăлать.



Все ушли. Осталась у Родника под Дубом лишь одна девушка, красивая и статная, только глаза у неё больно недобрые. Мать нарекла её Эпсирпи, но сельчане звали девушку — Хаярпи, что значит «злая девушка».

— Опять Юрапи Манкун призвала, опять про неё в деревне говорить станут, что лучше неё никого во всём свете нет! — воскликнула она, топая ногами и сжимая кулаки. — А я? Разве я не красавица? Разве голос у меня не волшебный? Почему же все только эту Юрапи и видят, только её песни ждут?

А надо сказать, что у Хаярпи покойная бабка была колдуньей и перед смертью кое-чему её научила и наделила своей силой, а в придачу оставила ей говорящего Ворона. Он как раз прилетел, сел на ветку Дуба и слушал, что говорит его молодая хозяйка.

— Кар-р! Кар-р! Хочешь, чтобы только тебя любили и хвалили? — каркнул он.

— Хочу! Очень хочу! Посоветуй, что мне делать?

— Вся сила Юрапи в её песне, — задумался Ворон. — Что, если украсть у неё песню? Тогда и сама она никому не нужна и не мила станет.

— Верно говоришь, Ворон! Так я и сделаю. Только вот как? Она ведь просто так не отдаст песню.

— А ты отними у неё самое дорогое, а потом предложи ей обмен.

— Правильно. Ох и умен ты. Так я и сделаю! — воскликнула Хаярпи. — Знаю я, что она Кевера любит.

Ват Юман айĕнчи Çăлкуç умĕнче йăрăс пӳллĕ те илемлĕ пĕр пике çеç тăрса юлать. Сăнĕпе чипер хĕрĕн куçĕсем яланах сивĕ хĕм сапнă. Çавăнпа ăна, Эпсирпи ятлăскерне, куç хыçĕнче çынсем Хаярпи тесе чĕннĕ.

— Мăнкуна йыхравлама каллех Юрăпие шанчĕç. Ялта ăна çитекенни çук тесе Юрăпие мухтама пуçласçĕ ĕнтĕ, — ура тапса, чышкине чăмăртаса вĕчĕрхеннĕ вăл. — Эпĕ илемлĕ мар-и? Манăн сасă асамлă мар-им? Мĕншĕн çынсем Юрăпие çеç кураççĕ, ун юррине çеç кĕтеççĕ?

Хаярпин асламăшĕ тухатмăш пулнă, вилес умĕн мăнукне хăйĕн вăйне тата калаçакан Çăханне парса хăварнă. Çав Çăхан Юман турачĕ çине вĕçсе килсе ларнă, çамрăк хуçи мĕн калаçнине итленĕ.

— Кар-р! Кар-р! Хăвна юратса мухтанине илтес килет-и? — сасă панă вăл.

— Çав тери илтес килет. Мĕн тăвас ман, кала-ха?

— Юрăпин пĕтĕм вăйĕ юрăра, — шухăша кайнă Çăхан. — Унăн юррине вăрласан мĕн пулать? Ун чух вăл никама та кирлĕ пулмĕ, хăй те никама та килĕшмĕ.

— Тĕрĕс калатăн, Çăхан. Шăпах çапла тăвăп та. Анчах мĕнле майпа вăрлас-ха? Хăй ирĕкĕпех парас çук вăл юррине.

— Эсĕ унăн чи хаклă япалине туртса ил, кайран ăна юрăпа ылмаштарма сĕн.

— Чăнах та. Ăслă та-çке эсĕ, кайăкăм! Шăпах çапла тăвăп, — кăшкăрса янă Хаярпи. — Юрăпишĕн чи хакли — Кĕвĕр. Юратать вăл ăна.





И-46592
Национальная библиотека
Чувашской Республики



— Заколдуй его, опои его, приворожи его и тогда Юрапи тебе сама песню отдаст. Да ещё и просить будет, чтобы ты взяла.

— Так я и сделаю. Когда Акатуй справлять будем, там я Кевера и опою.

Сказала так злая девушка и побежала в деревню. А Ворон вслед за ней полетел.

Зашелестел молодыми листьями могучий Дуб, заскрипел ветками, нахмурился и заворчал:

— Ой, не дело придумала внучка колдуньи. Песню у Юрапи отнять хочет. Как же мы без её звонкой песни жить будем? От тоски засохнем. Слышь, Родник? Что скажешь?



— Тухатласа каччӑ пуçне çавӑр, кайран Юрӑпи хӑех парӗ юррине. «Илсем» тесе те йӑлӑнӗ-ха.

— Юрӗ, эс калана пек тӑвӑп. Меллӗ вӑхӑт — Акатуй çиттӗр-ха, унта çавӑратӑпах Кӗвӗре, — терӗ те хаяр пике ял еннелле чупса кайрӗ. Ун хыççӑнах çуначӗсене сулса Çӑхан вӗçрӗ.

Çамрӑк çулçисемпе шуйханса, турачӗсемпе кӑмӑлсӑррӑн чӗриклетсе лаштра Юман шухӑшлӑн сӑмах хушрӗ:

— Ырӑ мар ӗç шутласа хунӑ тухатмӑш мӑнукӗ. Юрӑпирен юрӑ туртса илесшӗн. Ун юррисӗр мӗнле пурӑнӑпӑр эпир? Тунсӑхласа вилӗпӗр. Илтетӗн-и, Çӑлкуç? Эс мӗн калӑн?



— Беда, беда! — согласился Родник и тоже заволновался. — Привык я под песни Юрапи воду свою гнать к реке великой, чтобы текла она к далёкому морю синему. А что Солнце нам скажет? Может успокоит? Эй, Солнце, Солнышко! У Юрапи песню хотят отнять. Что делать будем?

Солнце, которое задремало в полуденном небе да на мягком облачке, открыло глаза и вздохнуло:

— Что такое? Ничего я не слышало. Убаюкала меня песня Юрапи. Как же хорошо она поёт.

Зевнуло Солнце, укрылось облаком, словно одеялом и опять задремало. Так Дуб и Родник от него ничего и не добились.

А люди тем временем вспахали землю тяжёлыми плугами и засеяли её золотыми зёрнами. Теперь пришла пора справлять второй самый главный чувашский праздник — Акатуй. Ох, и весёлый, радостный этот день, когда все на Акатуй идут. Веселей него нет. Песни уже с утра над деревней звучат, вкусный дух повсюду витает, и опять весь народ спешит на поляну к старому Дубу. Опять Ахтупай молитву благодарственную читает и жертвы богатые приносит, а затем начинаются соревнования в силе и ловкости.

Сначала, как полагается, соревнуется детвора, кто быстрее бегает, выше прыгает, крепко борется. Затем, когда ребятишки всласть наиграются, выходят настоящие богатыри, и впереди всех — Актар. Вот уже третий



— Инкек, чăн инкек! — хумханма пуçларĕ Çăлкуç та. — Шывăм часрах кăвак тинĕсе çиттĕр тесе эпĕ ăна юрă çеммипе аслă юхан шыва ăсататтăм. Хĕвел мĕн шутлать-ши? Пĕлесчĕ. Тен, вăл чуна лăплантарĕ?

— Эй, сарă Хĕвел! Юрăпи юррине туртса илес текенсем пур. Мĕн тумалла-ши?

Кăнтăрлахи тӳпере мамăк пĕлĕт çинче тĕлĕрсе кайнă Хĕвел куçне уçрĕ те вĕрин сывласа илчĕ:

— Мĕн терĕр çак? Нимĕн илтеймесĕрех юлтăм. Юрăпи юррипе канлĕн çывăрса кайнă та... Мĕнле лайăх юрлать вăл.

Хĕвел тутлăн анасласа илчĕ те кăпăшка пĕлĕтпе утиял пек витĕнсе каллех куçне хупрĕ. Лаштра Юманпа Çăлкуç ун шухăшне пĕлеймесĕрех юлчĕç.

Инкек çывхарнине сисмен çынсем çĕре суха пуçĕсемпе кăпкалатрĕç те ылтăн пĕрчĕсем акса хăварчĕç.

Чăвашсен чи сумлă иккĕмĕш уявĕ — Акатуй çитрĕ. Унран хаваслăрах кун çуках. Пурте-пурте уява тапранса тухаççĕ. Ял çийĕн ирех юрă янăрама пуçлать, тавралăха тутлă шăршă сарăлать, мĕнпур халăх каллех уçланкăри ватă Юман патне васкать. Ахтупай ырăсене пуççапнă, парне кӳнĕ хыççăн вăй виçмелли вăйăсем пуçланаççĕ. Чи малтан ачасем ăмăртма тытăнаççĕ: кам хăвăртрах чупать, çӳллĕрех сикет, лайăхрах кĕрешет? Ачасем выляса киленсен чăн-чăн паттăрсем кĕрешĕве тухаççĕ. Чи маттурри — Актар. Виççĕмĕш çул ĕнтĕ унран никам та иртеймест. Вăл пуринчен те хăвăртрах







год, как никто его одолеть не может. Лучше всех стреляет он из лука, быстрее всех бегает, выше всех прыгает, поднимает на шесте сразу десять мальчишек, и никто его побороть не может. Вот и в этом году он всех побеждает, и снова все называют его Паттар, что значит богатырь. И радуются все за него, и особенно его друг Кевер, чья игра вдохновляет Актара на победу. А уж девушки вокруг Актара вьются, подарками заваливают. Кто рубашку подарит, кто — платок расшитый, кто — сладости, а кто кружку пива поднесёт и кусок пирога.

Пока все Актара поздравляли, Эпсирпи-Хаярпи подошла к Кеверу со спины и закрыла ему глаза руками.

— Юрапи! — радостно воскликнул Кевер. — Это ты?

— Я, — подделав голос Юрапи отвечает внучка колдуньи, — тебе подарок принесла. Закрой глаза. Не открывай. И руки подними.

Послушался Кевер, закрыл глаза, поднял руки вверх, а Хаярпи опоясала его чёрным поясом. Вздрогнул Кевер, открыл глаза и стал сам не свой. Околдовала его злая девушка.

— Любишь меня? — спрашивает.

— Люблю, — не своим голосом отвечает Кевер.

— А про Юрапи забыл?

— Забыл.

А тут к Кеверу Юрапи подбежала, за руки его берёт и вдруг видит, что не узнает он её.

— Что с тобой, Кевер?

чупать, никамран та çӳллӗрех сикет, шӑчӑ çумне сырӑннӑ вунӑ ачана ним мар çӗклет, вӑлах чи пултаруллӑ кӗрешӳçӗ, чи çивӗч куçлӑ ухӑçӑ. Ӑна çитекенни кӑçал та çук. Паттӑрах çав ӗнтӗ. Çакӑн пек маттур качча пурри-пе пурте савӑнаççӗ, уйрӑмах — Кӗвӗр, унӑн тусӗ. Миçе хӗр куç хывмасть-ши Актара? Пӗри паттӑра кӗпе парнелет, тепри — тӗрӗллӗ тутӑр, виççӗмӗшӗ — тутлӑ çимӗç, хӑшӗ кукӑльпе кӑпӑклӑ сӑра сӗнет.

Актара саламланӑ самантпа Эпсирпи-Хаярпи усӑ курма васкарӗ. Вӑл Кӗвӗр патне хыçалтан çывхарчӗ те унӑн куçӗсене аллисемпе хупларӗ.

— Юрӑпи! — хаваслӑн сас пачӗ Кӗвӗр. — Эсӗ-и ку?

— Эпӗ-çке, — Юрӑпи сассипе хуравларӗ тухатмӑш мӑнукӗ. — Сан валли парне илсе килтӗм. Куçна хуп та аллусене çӗкле.

Кӗвӗр вӑл хушнине итлесе куçӗсене хупрӗ, аллисене çӳлелле çӗклерӗ. Çав самантрах Хаярпи ун пилӗкне хура пиçиххипе çавӑрчӗ. Кӗвӗр сасартӑк туртӑнса илчӗ, нимле мар пулса кайса куçӗсене уçрӗ. Хӑйӗн хура ӗçне пурнӑçланӑ Хаярпи унран:

— Юрататӑн-и мана? — тесе ыйтать.

— Юрататӑп, — тет Кӗвӗр пачах ют сасӑпа.

— Юрӑпи çинчен манса кайрӑн-им?

— Астумастӑп.

Çак самантра Кӗвӗр патне Юрӑпи чупса пырать те аллинчен тытать. Анчах лешӗ ӑна палламасть те.

— Мӗн пулнӑ сана, Кӗвӗр?







— Забыл он тебя, — отвечает ей Хаярпи. — Теперь меня любит. А ну, скажи, Кевер, кого из нас любишь?

— Эпсирпи.

Горько заплакала Юрапи, потому что больше всех на свете любила она Кевера. Хаярпи над ней насмехается, а на плечо ей Ворон сел и радостно каркает.

— Тогда пойдем со мной, Кевер! — скомандовала Хаярпи, взяла музыканта под руку и повела с собой.

— Кевер? — голос Юрапи дрожал от горя. — Кевер!

Но любимый даже не обернулся. Зато разлучница чуть шею не свернула глядя на Юрапи.

— Чего смотришь? — обратился к Юрапи Ворон. — Возвращай скорее своего жениха.



— Маннă вăл сана, — тет Хаярпи. — Халĕ вăл мана юратать. Кала-ха, Кĕвĕр, эсĕ пирĕнтен хăшне юрататăн?

— Эпсирпие, — тет каччă.

Кĕвĕре çут тĕнчере пуринчен ытла савакан Юрăпи хурланнипе йĕрсе ярать. Ун инкекĕ Хаярпишĕн кулă кăна. Усал чунлă хĕр хулпуççийĕ çине килсе ларнă Çăхан хаваслăн кранклатать.

— Атя, Кĕвĕр, — тесе Хаярпи вăйăçа илсе каять.

— Ăçта каятăн, Кĕвĕр? — ĕсĕклет Юрăпи. — Кĕвĕр!

Юратнă каччи çаврăнса та пăхмасть. Хаярпи каялла пăха-пăха утать, мăйĕ мĕнле пăрăнса каймасть тулĕк.

— Мĕн пăхса тăратăн? — тет Çăхан Юрăпие. — Тавăрма тăрăш каччуна.



— Как же я его верну, если он меня разлюбил? — заплакала Юрапи.

— Как разлюбил, так опять полюбит, — закаркала хищная птица. — Обменяй Кевера у Эпсирпи на самое дорогое, что у тебя есть.

Послушалась Юрапи Ворона и побежала догонять Хаярпи. Догнала, схватила её за плечо и взмолилась:

— Верни мне любимого! Самое дорогое отдам за него!

— Самое дорогое?

— Да. Что ни скажешь, всё отдам.

— Тогда отдай мне урожайную песню.

Испугалась Юрапи:

— Что ты? Что ты? Как же я её тебе отдам? Кто её петь будет? Кто урожай растить будет? Ничего не вырастет без урожайной песни. Ведь деревня без хлеба останется, без ячменя, без хмеля. Не с чего будет тогда пироги печь и пиво варить.

— Это не твоя забота. Не хочешь отдавать песню, ступай прочь. А только Кевер навсегда со мной останется.

Хотела Хаярпи прочь идти, но Юрапи её остановила:

— Хорошо, пусть по-твоему будет. Забирай песню, только верни мне моего Кевера.

Только сказала так Юрапи, как грянул гром, сверкнула молния, и песня оказалась в руках Хаярпи. Спрятала она её подальше, громко рассмеялась и исчезла.

Остались вдвоем Юрапи и Кевер. Плачет певунья, смотрит на неё парень и ничего понять не может.



— Вăл манран сивĕннĕ пулсан епле тавăрăп-ха ĕнтĕ эпĕ ăна? — каллех йĕрсе ярать юрăç.

— Мĕнле сивĕннĕ, çавăн пекех çаврăнĕ, — кранклатать Çăхан. — Мĕн пур хакли, çавăнпа ылмаштар Кĕвĕре.

Çакна илтсен Юрăпи Хаярпи хыççăн чупать. Хăваласа çитет те йăлăнма пуçлать.

— Туртса ан ил ман юратнă çынна! Уншăн эпĕ чи хаклине те пама хатĕр.

— Чи хаклине те-и?

— Мĕн ыйтатăн, çавна паратăп.

— Апла тăк... пар мана тыр-пул юррине.

Юрăпи хăраса каять:

— Мĕн каласан эсĕ? Çав юрра мĕнле парас-ха ман сана? Ăна малашне кам юрлĕ? Тыр-пул юррине юрламасан тухăç та пулмĕ, пĕтĕм ял çăкăрсăр, урпасăр, хăмласăр тăрса юлĕ. Мĕнрен кукăль пĕçерĕпĕр, мĕнрен сăра тăвăпăр?

— Ку сан ĕç мар, — тет сиввĕн лешĕ. — Юрра пама килĕшмесен каях кунтан. Кĕвĕр яланлăхах манпа юлĕ.

Хаярпи пăрăнасшăнччĕ, Юрăпи ăна тытса чарать.

— Юрĕ, эсĕ каланă пек пултăр. Илех юррăма, анчах та Кĕвĕре тавăрса пар.

Юрăпи çакăн пек каласанах уяр кунра аслати авăтса ярать, ялтăртатса çиçĕм çиçсе илет. Тыр-пул юрри Хаярпи аллине куçать. Хыттăн ахăрса ярса вăл ăна шаларах пытарса хурать, кĕçех хăй те куçран çухалать.

Юрăпипе Кĕвĕр иккĕшех юлаççĕ. Ĕсĕклесех йĕрекен хĕрĕ çине пăхса тăракан качча нимĕн те ăнланмасть-ха.







— Что случилось? Почему ты плачешь, любимая моя?

Рассказала ему всё Юрапи. Погоревали парень и девушка, погоревали, а потом утешились. Какая разница у кого урожайная песня? Пусть теперь Хаярпи будет первой певуньей в деревне. А они и так счастливы, потому что любят друг друга.

Напрасно утешали себя Юрапи и Кевер. Ничего зря не делается. Время шло, а поля и плантации хмеля безжизненные стоят, словно и не сеяли их, не лелеяли. Засуха на родной край навалилась, ни единого облачка в небе, ни единого дождичка, ни капельки. И не звенит над землей урожайная песня. Не поёт по утрам соловей, не кружат с песней ласточки, не радуют трелью



— Мĕн пулнă? Мĕншĕн макăратăн эсĕ, савнă пикем?

Юрăпи ăна пĕтĕмпех каласа парать. Хĕрпе качча иккĕн тан кулянма пуçлаççĕ. Анчах халĕ ĕнтĕ нимĕн те тăваймăн. Тыр-пул юрри кирек камра пулсан та çавах мар-и, лăплантарма тăрăшрĕç вĕсем пĕр-пĕрне. Ан тив, паянтан пуçласа ялти пĕрремĕш юрăç Хаярпи пултăр. Вĕсем вара капла та телейлĕ, мĕншĕн тесен пĕр-пĕрне юратаççĕ.

Кăлăхах лăпланнă Юрăпипе Кĕвĕр. Нимĕн те ахаль иртмест иккен. Вăхăт шăвать, тырă пуссисемпе хăмла лаптăкĕсем ешермеççĕ, нимĕн те акман-лартман тейĕн. Тӳпере пĕр пĕлĕт те çук, çĕре пĕр тумлам та ӳкмест. Уйсем типсе кайнă. Хирте тек тыр-пул юрри илтĕнмест. Ирсерен шăпчăк та юрламасть, çĕр çийĕн чĕкеççем те явăн-



иволги. Не кукует в лесу кукушка. Даже голуби не воркуют. Удивляется народ.

— Почему Юрапи не поёт? Что случилось? Где урожайная песня?

Но не поёт Юрапи, только горько плачет, а вместе с ней плачет и скрипка Кевера. И сколько не приставала к внучке бабушка Айуйке, та не смогла рассказать ей о своем ужасном поступке, которым обрекла она на гибель урожай, а значит и всех людей.

— Ай-уй! Это все из-за засухи! — сказала тогда бабушка Айуйке старому Ахтупаю. — Воздух сухой, горло моей внучке сушит, вот она петь и не может. Надо дождь звать! Проводи Сюмар чук, Ахтупай.



маççĕ, сар кайăк та сас памасть. Вăрманта куккук сасси çук. Кăвакарчăнсем кăлтăртатмаççĕ. Тĕлĕнет халăх!

— Мĕншĕн Юрăпи юрлама пăрахнă? Мĕн пулнă? Ăçта çĕтнĕ тыр-пул юрри?

Юрлас выраннe Юрăпи хурланса йĕрет, унпа пĕрле Кĕвĕрĕн сĕрме купăсĕ те макăрать. Айуйкке асанне темле тархасласан та мăнукĕ ăна чăннине каласа пама хăюлăх çитереймест. Тыр-пул типсе ларнăшăн, çынсем çăкăрсăр юлнăшăн хăйне айăплă туять вăл.

— Ай-уй! Çак инкек пĕтĕмпех шăрăха пула, — тет Айуйкке асанне ватă Ахтупая. — Сывлăш ытла та типĕ, пырĕ типнĕрен юрлаймасть ĕнтĕ мăнукăм. Çумăра чĕнес пулать! Çумăр чӳкĕ ирттер, Ахтупай.



И объявил Ахтупай Сюмар чук, так в стародавние времена назывался у чувашей обряд вызывания дождя.

На следующий день люди пошли всей деревней к реке, развели на берегу костры, стали варить кашу и яйца, а по всему берегу втыкали веточки, а на них нанизывали яичную скорлупу, и нитками привязывали воробьев.

— Всё готово? — спросил наконец Ахтупай.

— Готово! — ответил ему хором народ.

— Начинай танцевать, Айуйке! — велел старец. — Пусть твой танец огня станет началом моей молитвы.

Вышла вперёд бабушка Айуйке, и без всякой музыки, только подпевая себе всё еще сильным звонким



Хисеплĕ ватă ял халăхне Çумăр чӳкне хатĕрленме хушрĕ.

Тепĕр кунне пĕтĕм ял халăхĕ шыв хĕрне пухăнчĕ. Вут хурса хуран çакрĕç, пăтă тата çăмарта пĕçерчĕç. Çыран хĕррипе йывăç турачĕсем чиксе тухрĕç, вĕсем çине çăмарта хупписем тирчĕç, малтанах тытса хатĕрленĕ çерçисене çиппе кăкарчĕç.

— Пурте хатĕр-и? — ыйтать Ахтупай.

— Пурте, — терĕç ăна харăссăн.

— Ташă пуçла, Айуйкке! — хушрĕ ватă. — Сан ташшу манăн кĕлĕ пуçламăшĕ пултăр.

Айуйкке асанне чи пысăк кăвайт патне тухса ватлăхра та уççăн янăракан сассипе тута кĕвви каласа ташлама







голосом, стала танцевать вокруг самого большого костра. Кружила она вокруг него, кружила, красиво и необычно, и всё ближе к огню, всё теснее, и вот уже она вбежала прямо в костер, тут же выскочила обратно, потом обратно в огонь, аж искры столбом вокруг летят.

Кивнул Ахтупай, и к Айуйке присоединилась ещё одна старушка, затем ещё одна, и вот уже они втроём вокруг огня танцуют и прямо в пламя вбегают. И что за чудо, под их напором стал огонь съёживаться. Всё меньше и меньше становится костёр. Затем и женщины помоложе топчут его, и вот уже весь огонь затоптан, только дымок остался. Одолели женщины огонь, победили. Встал на их место Ахтупай и поднял руки к небу:

— Я обращаюсь к тебе, Бог дождя! — могучим голосом закричал старик. — Откликнись на наши молитвы, пошли нам дождя, и убереги народ наш от всех ненастий: от града, от бури, от заморозков... И прими от нас подарки!

При этих словах все воробьи, что были привязаны к веткам, были отпущены на свободу и с громким и благодарным щебетом вспорхнули в небо и полетели ввысь.

И начался праздник. Заиграла музыка, зазвенели девичьи голоса, стали люди пировать в честь предстоящего дождя. После трапезы все бросились к реке, и, не снимая одежды, стали в ней купаться и плескаться. Все от мала до велика, млад и стар. Старики входили в реку степенно и чинно, обмывали себе лицо, а немощных



пуçлать. Кăвайт тавра çаврăна-çаврăна ташлать, кашни çаврăнмассерен вут патне çывăхарах та çывăхарах пырать. Акă ĕнтĕ вăл кăвар çинех кĕрсе каять. Ташласах каялла тухать, унтан урисем каллех кăвар çине пусаççĕ. Йĕри-тавра хĕлхем сирпĕтсе ташлать.

Ахтупай пуçне сĕлтсенех Айуйккепе пĕрле ташлама тепĕр хĕрарăм тухать, унтан — тата тепри. Халĕ ĕнтĕ вĕсем кăвайт тавра виççĕн ташлаççĕ, ялкăшакан кăвара виççĕн тан таптаççĕ. Тĕлĕнтермĕш мар-и, вĕсем тăпăртатнине вут та тӳсеймест-мĕн, çулăмне чакарсах пырать. Кăвайт пĕчĕкленнĕçем ăна таптама çамрăкрах хĕрарăмсем те хутшăнаççĕ. Акă ĕнтĕ сӳнчĕ вут, тĕтĕм çеç мăкăрланать.

Хĕрарăмсем çулăма çĕнтерчĕç. Ахтупай малалла тухса аллисене тӳпенелле çĕклерĕ:

— Турăçăм, тархасласа ыйтатăп: çумăр пар! — хăватлă сасăпа кăшкăрса ячĕ старик. — Илтсем пирĕн кĕлле, çумăр ярса пар, халăха инкекрен хăтар: пăр çăвасран, çил-тăвăл тухасран, тăм ӳкесрен сыхла. Тата йышăнсам пирĕнтен парне!

Çак сăмахсем хыççăн йывăç турачĕсем çумне кăкарнă çерçисене ирĕке яраççĕ те лешсем савăнăçлăн чĕвĕлтетсе пĕлĕтелле вĕçсе хăпараççĕ.

Хыççăнах уяв пуçланать. Вăйăçсем кĕвĕ каласçĕ, хĕрсем юрлаççĕ, халăх çумăра кĕтсе апата ларать.

Хуранта пиçнĕ пăтăпа сăйланнă хыççăн кĕпе-тумтирне хывмасăрах пурте юхан шыва чăмаççĕ те ишме-







старцев осторожно обливали водой их внуки. Никто в этот день не должен был сухим оставаться. Парни набирали воду в вёдра, бежали в деревню и обливали всех попавшихся на пути, особенно доставалось молодым женщинам. Прохожих хватали и бросали в реку, все ходили весёлые и мокрые до нитки, весь день до вечера продолжалась эта игра в обливание.

— Ну вот, не сегодня-завтра пойдет дождь, — сказал Ахтупай бабушке Айуйке. — А ты молодец! Очень хорошо исполнила танец огня. Быстро одолела огонь.

И стали люди ждать дождя. Но не пошёл он ни на следующий день, ни через два, и на третий день продолжалась засуха.



чӑмпӑлтатма пуçлаççӗ. Пӗчӗкки те, пысӑкки те шыва кӗрет. Ваттисем васкамасӑр шыва утса кӗреççӗ те пичӗсене йӗпетеççӗ. Ватӑлса çитнисене мӑнукӗсем асӑрханса шывпа уçӑлтараççӗ. Çак кун пӗрин те типӗ юлмалла мар. Каччӑсем витрисене шыв тултарса ялалла йӑтаççӗ, хирӗç пулнӑ кашни çынна пӗр шелсӗр ислетеççӗ. Çамрӑк хӗрарӑмсене выля-выля йӗпетеççӗ. Иртен-çӳрене тытса шыва пӑрахаççӗ. Пӑрсан шыв тухмалла йӗпенсе пӗтнӗскерсем, пурте хаваслӑ. Каçченех шывла вылярӗç çынсем.

— Пулчӗ. Паян мар тӑк ыран çумӑр пулӗ, — тет Ахтупай Айуйккене. — Эсӗ чӑн та маттур! Вут ташшине çав тери лайӑх ташларӑн, вут-çулӑма хӑвӑрт çӗнтертӗн.

Çынсем çумӑр кӗтме пуçларӗç. Анчах вӑл тепӗр кунне



— Ай-уй! — вздыхает бабушка Айуйке. — Ай-уй! Беда, беда!

И опять она стала приставать к Юрапи, расспрашивая, почему та не поёт. И опять ничего ей не рассказала внучка. Но зато побежала она к Кеверу, а вместе они отправились к Хаярпи. Но та их даже за порог не пустила.

— Почему не поёшь урожайную песню? — спрашивают они её. — Неужели народ погубить хочешь?

— Не слушает меня твоя песня! — зло ответила внучка колдуньи. — Не поётся она из моих уст. Не звучит.

— Тогда верни её обратно! — просит Юрапи. — Ведь люди страдают. Вымрут все. Отдай урожайную песню!



те, иккĕмĕшĕнче те çумарĕ. Виççĕмĕш кунĕ те çаплипех шăрăх тăчĕ.

— Ай-уй! — кулянать Айуйкке. — Ай-уй, инкек!

Каллех Юрăпи çумне çыпçăнчĕ ватă хĕрарăм. Лешĕ юррине юрлама мĕншĕн пăрахнине пĕлесшĕн. Мăнукĕ нимĕн те чĕнмерĕ. Асламăшĕнчен пăрăнса Кĕвĕр патне васкарĕ. Иккĕшĕ Хаярпи патне çул тытрĕç. Лешĕ вĕсене алăк урати урлă та каçармарĕ.

— Мĕншĕн юрламастăн тыр-пул юррине? — ыйтаççĕ хаяр пикерен. — Халăха тĕппипех пĕтерес тетĕн-им?

— Пăхăнмасть мана сан юрру! — çиллессĕн тавăрчĕ тухатмăш мăнукĕ. — Янăрасшăн мар вăл манăн сасăпа.

— Апла тавăрса пар каялла, — йăлăнать Юрăпи. —



— Ещё чего! Моя эта песня! И только моя. И до людей мне дела нет. А вы пошли прочь!

И напустила она на Юрапи и Кевера Ворона. Каркнул тот громко и страшно, напугал их, убежали друзья в ужасе и горе. Когда опомнились, рассердились, да пошли обратно, чтобы уже в этот раз силой отнять у Хаярпи урожайную песню, то встретился им на пути огромный и страшный медный Медведь. Это предупреждённая Вороном молодая колдунья вызвала его из-под земли колдовскими чарами. Встал медный Медведь на задние лапы, заревел, и опять убежали молодые музыканты. Где им с Медведем воевать? Да не с простым, а с медным, из-под земли вызванным.

— Надо Актара звать, богатыря нашего! — говорит тогда Кевер. — Одни мы не справимся.

Позвали они Актара, рассказали ему всё и попросили одолеть медного Медведя. С радостью согласился богатырь акатуйский помочь друзьям и пошёл к дому колдуньи. Напал на него медный зверь, да только Актар даже не дрогнул, не испугался, ударил его кулаком прямо по носу, затем схватил могучими руками, сжал, так Медведь на куски и развалился.

— Все! — Актар стряхнул с себя пыль. — Одолел я Медведя медного. Пойдем заберём урожайную песню.

Пошли они опять, чтобы силой отнять у Хаярпи урожайную песню, но на их пути из-под земли, из леса тёмного, дремучего, вызванный подземным кротовым

Çынсем асапланаççĕ. Вилсе пĕтĕç акă пурте. Тавăрса пар юрра!

— Кĕтсех тăр! Манăн вăл халь. Пĕр манăн çеç. Çынсемпе ман ним ĕçĕ те çук. Кайăр кунтан!


Çийĕнчех вăл хăйĕн тарçине Çăхана Юрăпипе Кĕвĕр çине тĕллеттерсе ячĕ. Лешĕ пыр тĕпĕпе кранклатса, çуначĕсемпе хăлаçланса çывхарсан хуйха ӳкнĕ юрăçпа Кĕвĕр хăраса тарчĕç.

Ăна кĕрсен хăйсен хăравçăлăхĕнчен хăйсем аванмарланчĕç. Таврăнас та юрра вăйпах туртса илес тесе тапраннăччĕ çеç, вĕсен умне пысăк та хăрушă пăхăр Упа сиксе тухрĕ. Çăхан çитсе систернĕ ĕнтĕ Хаярпие. Лешĕ хăйĕн хаяр асамлăхĕпе усă курса çĕр айĕнчи Упана чĕнсе илнĕ. Пăхăр Упа кайри урисем çине тăрса мĕкĕрсе ячĕ. Каччăпа хĕр каллех хăраса ӳкрĕç. Упана кĕрешсе çĕнтереймĕн. Пăхăррине, çĕр айĕнчен тухнине, пушшех те.

— Хамăрăн паттăра — Актара чĕнес, — сĕнет Кĕвĕр. — Иксĕмĕрех эпир Упана çĕнтереймĕпĕр.

Мĕн пулса иртнине пĕлсен Акатуй паттăрĕ Актар хаваспах килĕшрĕ вĕсене пулăшма, Хаярпи çурчĕ енне çул тытрĕ. Пăхăр Упа тапăнсан паттăр нимĕн чухлĕ те хăраса ӳкмерĕ, çирĕп чăмăрĕпе утамана сăмсинчен тăрăслаттарчĕ, унтан вăйлă аллисемпе ярса тытрĕ те пĕтĕм вăйран хĕссе лартрĕ. Лешĕ чăл-пар кăна ванса кайрĕ.

— Пулчĕ те! — терĕ паттăр хăй çумне çыпçăннă тусана силлесе. — Пăхăр Упана парăнтартăм. Халĕ ĕнтĕ тыр-пул юррине каялла тавăрар.







ходом, вылез Чиге старик-Шурсухал — старичок с локоток с длинной белой бородой. Его тоже колдунья на помощь позвала. Даже Актар его испугался, что уж говорить об остальных. Шурсухала с детства все боятся. С колыбели матери пугают им непослушных детей. И послушных тоже. Для порядка. Взмахнул старичок с локоток своей длинной белой бородой и давай щекотать ею Актара, богатыря славного. А щекотка у него смертельная. Сначала защекочет до беспамятства, а потом длинными сильными пальцами и задушит.

— Что нам делать? — воскликнула Юрапи.

Вышел тут вперед Кевер.

— Постой, Чиге старик-Шурсухал! Перестань щекотать моего товарища, лучше послушай мою скрипку. На ней струны из солнечных лучей, а играю я смычком из серебряных лунных нитей. Отныне ты не будешь больше злым, а станешь добрым и мудрым!

С этими словами заиграл Кевер на скрипке весёлый добрый танец, да так задорно, что ноги сами в пляс пустились. Бросил старичок с длинной белой бородой щекотать Актара и пустился в пляс. Пляшет и остановиться не может. Наконец устал, взмолился:

— Прекрати играть, Кевер-музыкант! Не буду больше тебе и твоим друзьям вредить, зло творить.

— Будешь добрым?

— Обещаю!

— Будешь мудрым?

Хаярпи патне тӳрех çитеймерĕç. Вăрман варринчен, çĕр айĕнчи каюра çулĕпе шăвăнса, вĕсем умне Чике старик-Шурсухал тухса тăчĕ. Хăй чавса тăршшĕ çеç, шур сухалĕ вă-ăрăм. Вăл та тухатмăш чĕннипех тухнă. Малтанлăха Актар та хăраса ӳкрĕ унран. Ыттисем пирки мĕн каламалли пур? Чике старикрен ачаранах пурте хăраççĕ-çке. Итлемен ачасене амăшĕсем яланах унпа хăратаççĕ вĕт. Итлекеннисене те. Ашкăнма ан хăйччăр тесе. Хайхи старик шур сухалĕпе чаплă паттăра кăтăклама пикенчĕ. Вăл кăтăкласа вĕлерме те пултарать теççĕ. Малтан тăн çухаличчен кăтăклать те кайран вăрăм та вăйлă пӳрнисемпе пăвса хурать теççĕ.

— Мĕн тăвар-ши ĕнтĕ? — кăшкăрсах ячĕ Юрăпи.

Кĕвĕр малалла утрĕ.

— Тăхта, Чике старик-Шурсухал. Манăн юлташăма кăтăклама пăрах та сĕрме купăс сассине тăнла, — терĕ вăл. — Унăн хĕлĕхĕсене хĕвел пайăркисенчен тунă, сĕркĕчĕ çине уйăхăн кĕмĕл çипписене туртса карăнтарнă. Манăн кĕвве итленĕ хыççăн эсĕ хаярлăхна çухатăн, ырă та ăслă старик пулса тăрăн!

Кĕвĕр хаваслă ташă кĕвви тăсса ярать. Çав тери çăмăллăн калать, старик урисем хăйсемех сиккелеме пуçăнчĕç. Шурă вăрăм сухаллă старик Актара кăтăклама пăрахса ташша тухрĕ. Чарăнмасăр ташлать хайхи. Ывăнсах çитрĕ, йăлăнма тытăнчĕ.

— Кĕвĕр вăйăç, чар сĕрме купăсна! Сана та, тусусене те усал тумăп паянтан.



— Обещаю!

— Будешь отныне другом всех людей на земле?

— Буду, буду, буду! Только оставь скрипку, а то от твоей игры я просто сгорю или на части развалюсь. Или, того хуже, запутаюсь в своей бороде и удавлюсь! Пощади меня, славный музыкант!

Перестал Кевер играть, и старичок исчез. Потом уже его многие видели, да только с той поры Чиге старик-Шурсухал перестал быть злым и страшным. Стал он добрым и умным, подружился с людьми. Особенно у него большая дружба с малыми детьми повелась. Стал он их уму-разуму учить, да подарки дарить.

Одолев старичка, пошли Юрапи, Кевер и Актар опять



— Ырă кăмăлпа пурăнăн-и?
— Сăмах паратăп.
— Ăспа пурăнăн-и?
— Сăмах паратăп.
— Çĕр çинчи мĕнпур çыншăн тус пулăн-и?
— Пулатăп, пулатăп, пулатăп! Сĕрме купăсна калама кăна чарăн. Унсăрăн эпĕ е çунса, е пайăн-пайăн ванса кайăп. Е хам сухалпа хам çыхланса ларăп, пăвăнса вилĕп! Хĕрхенсем мана, чаплă вăйăç!

Кĕвĕр сĕрме купăсĕ шăплансанах шур сухаллă Чике старик куçран çухалать. Çавăн хыççăн нумайăшĕ курнă ăна, анчах вăл хаяр та хăрушăскер пулман ĕнтĕ. Ăсланнă тата ырă кăмăлланнă старик çынсемпе туслашса кайнă.



к Хаярпи, чтобы силой отнять у неё урожайную песню. Она их у дома сама встретила, с Вороном на плече:

— Не отдам я вам песню! Моя она будет, пусть хоть всё на свете погибнет. Заклюёт вас мой Ворон.

Тут Юрапи воскликнула:

— Птицы певчие, сёстры лесные, небесные, придите мне на помощь!

Прилетели тогда и сели ей на плечи: на правое Кукушка и Голубь, на левое Ласточка и Соловей.

— Помогите мне вернуть урожайную песню! Обманом у меня украла её злая девушка.

И тогда птицы взвились в воздух и полетели на Эпсирпи. Тут же прогнали они Ворона, только перья у



Уйрăмах ачасемпе çывăхаллăнă вăл. Пĕчĕк ачасемпе. Вĕсене парнесемпе савăнтарнă, ăса вĕрентнĕ.

Чике старике çĕнтернĕ хыççăн Юрăпипе Кĕвĕр тата Актар каллех Хаярпи патне каяççĕ унран тыр-пул юррине каялла илме. Çăханне хулпуççи çине лартнă хĕр вĕсене алăк умĕнче кĕтсе илет.

— Памастăп сире юрра! Тĕнчере мĕн пурри йăлтах вилсе пĕтсен те памастăп. Сире Çăханăм сăхса пĕтерĕ.

Чăтаймарĕ Юрăпи, кăшкăрса ячĕ:

— Юрăç кайăксем, вăрманти çунатлă йăмăкăмсем, килсемĕр, пулăшсамăр мана!

Кĕçех унăн сылтăм хулпуççийĕ çине Куккукпа Кăвакарчăн, теприн çине Чĕкеçпе Шăпчăк вырнаçаççĕ.



старой птицы полетели в разные стороны. Затем стали они кружиться над Эпсирпи и щебетать:

— Отдай песню Юрапи! Отдай песню Юрапи! Отдай песню Юрапи!

Да так громко они щебетали, так пронзительно, что чуть не оглохла злючка, уши руками зажимает, а всё равно в голову ей проникают птичьи голоса:

— Отдай песню Юрапи! Отдай песню Юрапи! Отдай!

Наконец не выдержала злая девушка и в сердцах крикнула:

— Да забирайте её. Всё равно не поётся она больше.

И как только она произнесла это, тут же песня урожайная вылетела на свободу. Подхватили её птицы и



— Пулăшсамăр тыр-пул юррине тавăрма. Хаярпи ăна манран ултавлă майпа туртса илчĕ.

Кайăксем вăр-р вĕçсе çĕкленчĕç те Хаярпие хупăрласа илчĕç, Çăхана хăвалама пуçларĕç, таврара тĕк кăна вĕçсе тăрать. Çăхан тарсан вĕсем Хаярпи тавра чĕвĕлтетсе вĕçсе çаврăнма тытăнчĕç.

— Пар-р-р юрра! Пар-р-р юрра! Пар-р-р юрра!

Вĕсен сассипе Хаярпин хăлхисем питĕрĕнсех ларчĕç, вĕсене вăл кăлăхах аллисемпе хуплама тăрăшать. Пурпĕрех хăлха çурасла янăрать:

— Пар-р-р юрра! Пар-р-р юрра! Пар-р-р!

Чăтаймарĕ, тӳсеймерĕ хаяр пике, кăшкăрсах ячĕ:

— Илĕрех! Пурпĕрех янăрамĕ вăл урăх!



бережно принесли Юрапи. Обрадовалась девушка, прижала песню к груди и тут же запела своим удивительным голосом. Разнеслась по всей земле урожайная песня. И тут же дождь полил, на небе засияла радуга, и начали поля наливаться урожаем. И увидели люди, что вернулась к ним песня Юрапи, обрадовались, и преисполнились их сердца радостью. Подхватили они долгожданную песню, запели вместе с певуньей, и вернулось счастье в их дома.

Только Эпсирпи не радовалась. Злилась и мучилась, и от этого стала некрасивой, безобразной, а потом и вовсе куда-то делась. Наверно сбежала в дальние края. Испугалась, что не простят ей люди, что хотела урожайную песню загубить, а вместе с ней и всех людей.

А Кевер на следующий же день послал к Юрапи сватов. И не стала больше прекрасная певунья раздумывать. Согласилась. Ох и весёлую же свадьбу сыграли Кевер и Юрапи. Всё по обряду сделали, по строгому обычаю, чтобы жизнь у них в будущем сложилась долгая и дружная. Благословили молодых Ахтупай с Айуйке и вся деревня. И свадьба эта продолжалась не один день. Столько песен на ней было спето, столько танцев исполнено, а музыка была такая громкая, что слышал её весь мир. А песни Юрапи до сих пор поются по всей чувашской земле и далеко за её пределами. На этом и сказка заканчивается, а песня — нет.



Вăл çапла каласанах тыр-пул юрри ирĕке вĕçсе тухать, кайăксем ăна тӳрех çуначĕсемпе ярса илеççĕ те Юрăпие тыттараççĕ.

Савăнса кайнă хĕр ăна çепĕççĕн илсе кăкăрĕ çумне тытать, çав самантрах ытармалла мар сассипе юрласа ярать. Тыр-пул юрри ян! кайса пĕтĕм çĕршыв тăрăх саланать. Çавăнтах çумăр çуса ярать, асамат кĕперĕ карăнать, уй-хирти пучахсем тĕшĕпе тулма пуçлаççĕ. Юрăпи хăй юррине тупнине курса çынсен чĕрисем савăнăçпа тулаççĕ, вĕсем хĕрпе пĕр саслăн юрласа яраççĕ. Телей те таврăнать вĕсен килне.

Эпсирпи çеç савăнмасть. Вăл хăй хаярлăхĕпе хăй асапланать, илемлĕ сăнне çухатса пырать. Кĕçех куçран пачах çĕтет. Тĕнче хĕрне тарса кайнă пулинех. Çынсем хăйне каçармасран хăранă, тен.

Кĕвĕр вара тепĕр куннех Юрăпи килне евчĕсем ячĕ тет. Илемлĕ юрăç тек иккĕленсе тăман, килĕшнĕ Кĕвĕр мăшăрĕ пулма. Çав тери хаваслă туй кĕрлерĕ тет. Туйне халăх йăлине пăхăнса ирттерчĕç тет. Çемйи туслă та çирĕп пултăр тесе ĕнтĕ Ахтупайпа Айуйкке, пĕтĕм ял халăхĕ пил пачĕ тет вĕсене. Темиçе куна пынă туйра янăранă ташă-юрă сасси тĕнче илтмеллех таçта-таçта çити саланчĕ тет. Юрăпи юррисене чăваш çĕрĕ çинче, ун тулашĕнче паян кун та юрлаççĕ. Юмахăн вĕçĕ пур, юррăн — çук.

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2Рос=Рус)6-4
С 90

Литературно-художественное издание

Для детей младшего школьного возраста

Суслин Дмитрий Юрьевич

ЮРАТПИ
ЮРӐТПИ

Этнографическая сказка

На русском и чувашском языках

Перевод на чувашский язык
Г.А. Матвеевой

Редактор *Г.А. Антонова*
Художник *Н.Н. Тихонова*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *Л.Д. Васильева*
Компьютерная верстка *Е.Е. Фоминой*

6+ Информаци продукцийĕн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010)
Знак информационной продукции
согласно ФЗ от 29.12.2010 г. № 436-ФЗ.


Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93 — 953003. Подписано к печати 04.04.14.
Формат 84x108 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл.печ.л. 6,72.
Уч.-изд.л. 4,79. Тираж 1500 экз. Заказ №410. Изд. № 47.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство» Мининформполитики Чувашии,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru. Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография №1», 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

© Суслин Д.Ю., 2008
© Суслин Д.Ю., 2014
© Матвеева Г.А., перевод, 2014
© Тихонова Н.Н., иллюстрации, 2014
© Чувашское книжное издательство, 2014

ISBN 978-5-7670-2199-4

4545.0



ISBN 978-5-7670-2199-4

Чувашское
книжное
издательство